Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

72 (7603) № ✻ Юн кун, 2008 çулхи сентябрĕн (авăн) 24-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче

## Çĕр улми вăйсене пĕрлештерет



***РАЙОН АДМИНИСТРАЦИЙĔН ПУÇЛĂХĔ Ю. ИВАНОВ РАЙОН ÇЫННИСЕНЕ ЧĔНСЕ КАЛАНИ***

***Авăн уйăхĕ вĕçленсе пырать. Маларах пулнă çумăрсем пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче çĕр улми кăларас ĕçсене вăхăтлăха чарса лартрĕç. Анчах юлашки кунсенче уяртнă çанталăк ĕçлеме мелсене уçса пачĕ. Çак вăхăтпа туллин усă курасси – пирĕн паянхи тĕп тĕллев. 1063 гектар çинче ăнса пулнă «иккĕмĕш çăкăра» уяр кунсенче кăларса пухса кĕртес ĕçе район çыннисене активлăрах хутшăнма, хуçалăх ĕçченĕсемпе шкул ачисем тăрăшакан уйсене тухса вĕсене пулăшу пама чĕнсе калатăп. Кĕрхи ĕçсем вĕçленсе пыраççĕ. Çак таранччен пысăк тăрăшулăх кăтартнă ял çыннисем çĕр улми пуссисенче те хастарлăх кăтартасса шанатăп. Пĕрлехи çак ĕçрен ялти культура ĕçченĕсем те, ял интеллигенцийĕ те, район центрĕнче ĕçлекен организацисем те айккинче юлмасса кĕтетĕп.***

***Пĕрлехи тăрăшулăхпа кăна çывăх вăхăтрах çĕр улми пуссисенче те кĕрхи ĕçсем вĕçленессе шанса тăратăп!***

Авăн уйăхĕн вĕçнелле пыратпăр пулин те, ылтăн кĕркунне çывхарать кăна. Апла пулсан иртнĕ çумăрсем те вăхăтлăх çеç пулчĕç тесе каламалла. Каламалла та кĕрхи çанталăк вылявлине шута илсе уй-хир ĕçĕсене кая хăвармасăр вĕçлессипе çанă тавăрса ĕçе кӳлĕнмелле. Ĕçлемелли вара район уй-хирĕсенче сахалах мар-ха. Кун йĕркинче тăракан чи пĕлтерĕшлĕ ыйту вăл – çĕр улмине кая хăвармасăр пухса кĕртесси. Кăçал районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче «иккĕмĕш çăкăр» лаптăкĕсем 1063 гектар йышăнаççĕ. Тĕп лаптăксем «Ударник» (320 гектар), «Свобода» (180 гектар), «Герой» (90) тата Ильич яч. хис. (85) хуçалăхсенче. Ку хуçалăхсенче паян пĕтĕм ĕç вăйĕ çĕр улми пуссинче. Акă «Свобода» хуçалăх паян виçĕ уй-хир бригадинче те çĕр улми кăларать. «Иккĕмĕш çăкăрăн» тĕрлĕ сорчĕсем ăнса пулни хире тухсанах аван курăнать. Çакăн пирки Çатракассинчи вăтам шкулта вĕренекенсем те çирĕплетеççĕ.

Иккĕмĕш уй-хир бригадин бригадирĕ В. Иванов каланă тăрăх хуçалăх шкул ачисене 13 гектар çĕр улми шанса панă. Юнашарах бригада халăхĕ тата хуçалăха пулăшма килнисем 40 гектар çинче ĕçлеççĕ. Ачасене те, бригада ĕçченĕсене те копалкăсемпе П. Ишаков, И. Васильев, М. Димитриев механизаторсем кăларса параççĕ. Михĕсене тултарнă çĕр улмине турттарассипе В. Толикинпа Н. Давыдов водительсем тăрăшуллă ĕçлеççĕ.



– Çĕр улмийĕ шултра та витри хăвăрт тулать, – терĕ тулли витрине михĕне пушатма йăтса пыракан Ирина Лебедева **(виççĕмĕш сăн ӳкерчĕкре)**. 6-мĕш класра кăна вĕренет-ха хĕр ача, анчах ĕçрен пĕр кун та юлмасть.

Ирина сăмахĕсене 5-мĕш класра вĕренекен арçын ачасем кар тăрса çирĕплетрĕç. Вĕсем тулнă витрисене пушатма тупăшсах класс ертӳçи С. Никитина патне чупса пычĕç **(пĕрремĕш сăн ӳкерчĕк)**.

Ачасем тупăшсах ĕçленине пăхса хир тăрăх утатăп. Уй таллккишпех шултра çĕр улмипе тултарнă михĕсемпе сеткăсем. Кунта ĕçе пĕлсе йĕркелени те куç умĕнчех. Çак шухăшпа шкул директорĕн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ Л. Никитина патне пыратăп.

– Тулли кунах ĕçлеместпĕр пулсан та, ачасемшĕн çăмăл ĕç мар. Çапах эпир йывăрлăхсене парăнма хăнăхман. Çанталăк тепĕр виçĕ кун уяр тăрсан хамăра çирĕплетсе панă уйра çĕр улми хăвармастпăр, – ачасен кăмăлĕ майлă калаçать Любовь Валерьевна **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре сулахайра)** юлашки кунсенчи уяр çанталăкра ĕç кал-кал кайнишĕн савăннине пытармасăр. Унăн сăмахĕсене юнашар тăракан В. Дмитриева вĕрентекен те çирĕплетет.

– Ачасем хăйсем мĕншĕн ĕçленине пĕлеççĕ, – терĕ вăл.

Ĕç кăтартăвне кура çĕр улми пуçтарнă çĕре хутшăннă ачасем пĕр куншăн тӳлевсĕр апат çиме 2-3 талон илĕç. Кунсăр пуçне шкул валли çĕр улми те пулĕ. Çак условипе кулленех 87-88 ача ĕçе тухать.

– Ял ачи темĕнле пулсан та çĕр ĕçĕнчен уйрăлаймастех. Акă çĕр улми пуçтарассине вĕçлĕпĕр те хуçалăхра хамăра шанса панă, çу кунĕсенче ăнăçлă пăхса ӳстернĕ выльăх кăшманне 3,5 гектар çинче кăларма пуçлăпăр. Ăна та пуçтарса кĕртмелле. Мĕнех, вĕренӳре çеç мар, ĕçре те хамăр тĕллевсене эпир пурнăçлатпăрах, – терĕ пĕтĕмлетӳ вы-



рăнне Любовь Валерьевна.

Копалкăсем иртсе кайнă май шкул ачисем каллех çĕр улми пуçтарма чупрĕç.

**Анатолий БЕЛОВ**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Хутса ăшăтмалли тапхăра хатĕрленсе

## Ăшă пама хатĕр

**Кĕрхи йĕпе-сапаллă та сивĕ кунсем катара мар ĕнтĕ. Юлашки кунсенче кăнтăрла ăшăткалама пуçларĕ пулин те, каç-каç çапах сивĕрех. Çавăнпа та чылайăшне çак ыйту канăç памасть: хăçан хваттерсене ăшă пырса çитĕши? Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕпе Владимир Германович НИКИТИНПА тĕл пулсан та малтан ăна çак ыйтăвах патăм: хваттерсенче, больницăсемпе шкулсенче, ача сачĕсенче хăçан ăшă кĕтсе илĕç-ха?**

– Çĕнĕлĕх мар, ку ыйту хутмалли сезон пуçланнă чухне вĕçĕмех çуралать. Çакна ăнланмалла та, никам та сивĕ хваттерте шăнса пурăнасшăн мар. Официаллă вара сывлăшăн талăкри вăтам температури 5 кун хушши 8 градусран кая пулчĕ пулсан, котельнăйсене ĕçлеттерме тытăнма ирĕк панă.

**– Çапах та шкулсенче, ача сачĕсенче, больницăсенче сивĕреххи халех паллă вĕт-ха?**

– Ку енĕпе çавна каласа хăварасшăн. Газ котельнăйĕсене ĕçлеттерме газ яма пуско-наладка тума ирĕк илме заявкăсене «Межрегионгаза» тăратнă ĕнтĕ. Паян-ыран ирĕк илмелле. Çапла вара сывлăш температури çӳлте асăннă чикĕ таран чакмасăрах шкулсене, больницăсене, ача сачĕсене каçхи-çĕрлехи вăхăтра та пулин хутса ăшăтма тытăнасшăн.

**– Хваттерсенче пурăнакансен вара температура 8 градуса çити хальтерех чактăрччĕ тесе ĕмĕтленмелли кăна юлать-им?**

– Ун пек каламан пулăттăм. Сивĕрех, йĕпе-сапаллă, нӳрĕ çанталăк пулсан ытти котельнăйсене те ĕçлеттерме тытăнăпăр. Кунта пĕр саманта асăнса хăварнă пулăттăм кăна. Темиçешер çурта хутса ăшăтакан пысăк газ котельнăйĕ вăл килти мар-çке. Ăна пĕрре ĕçлеттерме тытăнтăн пулсан ыран чарса лартма, тепĕр кунне каллех ĕçлеттерме тытăнма май çук. Вăл пĕр пĕтĕм системăпа çыхăннă.

Унччен тата мĕнле пулнă. Хутса ăшăтмалли сезон – октябрĕн 1-мĕшĕ çитиччен газ ярса пама ирĕк илме заявкăсене йышăнман. Кайран вара ирĕк илсе пуско-наладка тума 1–2 эрне те иртсе каятчĕ. Халĕ ку енĕпе лару-тăру япăх мар тесе каланă пулăттăм. Çанталăк сивĕтсе яричченех пуско-наладка валли ирĕк илсе хума тăрăшатпăр.

**– Патне çитсен котельнăйсене ĕçлеттерессипе пăтăрмахсем сиксе тухас хăрушлăх çук-и?**

– 100 процент пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулĕ, сезон тытăнсан нимĕнле ыйту та пулмĕ тесе никам та татса калаймасть. Анчах çавна пĕлтересшĕн. Котельнăйсене пурне те «Ростехнадзор», пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх, «Моргаушимежрайгаз» специалисчĕсем тĕрĕслесе тухнă, тупнă çитменлĕхсене пĕтернĕ. Кадрсем енĕпе те йĕркеллех. Апла пулсан кĕтмен-туман ыйтусем те пулмалла мар.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**тĕл пулса калаçнă.**

Республикăра

## Пĕлтерĕшлĕ ыйтусене сӳтсе явнă

Тунти кун Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров Правительство членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.

Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ Михаил Игнатьев республика уй-хирĕсенче ĕçсем мĕнле пыни çинчен каласа панă. Кăçал тырă пĕлтĕрхинчен нумайрах хатĕрленĕ. Малтисем халĕ юлса пыракан хуçалăхсене пулăшаççĕ, хăйсен техникине параççĕ. Çĕр улми пухасси кал-кал пырать: «иккĕмĕш çăкăра» талăкра вăтамран 600 гектар таран пухса кĕртеççĕ. Кĕрхи культурăсене палăртнă лаптăкăн 56 проценчĕ çинче акнă.

Президент Чăваш Енри çĕр ĕçченĕсем тĕллевсене, тĕпрен илсен, начар мар пурнăçласа пынине палăртнă. Çав вăхăтрах хăш-пĕр хуçалăхсем япăх ĕçлеççĕ. «Кунта çанталăк условийĕсем айăплă мар, хăйсен ĕçне йĕркелеме пĕлменни çинчен каламалла. Хамăрăн çитменлĕхсемшĕн çумăр çине йăвантарни пачах та вырăнлă мар. Çавăнпа та докладсенче «çанталăка пула» сăмахсемпе усă курмалла мар»,– тенĕ Николай Федоров.

Республика пуçлăхĕ усă курман çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртнине тĕплĕн тишкерме, çак ыйтупа ĕçлĕ канашлу ирттерме, унта хăш-пĕр тытăмăн тата вĕсен ертӳçисен ĕçхĕлне хаклама хушнă.

Чăваш Республикинче иртнĕ вырсарни кун Пĕтĕм Раççейри чупу кунĕ – «Нацисен кросĕ–2008» иртнĕ. Çак ăмăртусене нумайăн килĕштерме пуçларĕç. Чупма юратакансем çулленех ытларах та ытларах хутшăнаççĕ. «Нацисен кроссне» хутшăнса Президент пур районпа хулара та ăмăртусем ирттерме сĕннĕ. «Çакă пирĕн халăха тата туслăрах, пĕрлĕхлĕрех тумалли, сывă пурнăç йĕркине тата спорта юратакансен йышне ӳстермелли, çынсене ырă кăмăл-туйăм парнелемелли чи лайăх мел»,– палăртнă Президент.

Канашлура çавăн пекех республикăн социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвĕн ытти çивĕч ыйтăвĕсене те пăхса тухнă.

Йыхрав

## Мускав пасарĕсем сире кĕтеççĕ

«Ылтăн кĕркунне – 2008» Раççей агропромышленность эрни шучĕпе 2008 çулхи октябрĕн 10–14-мĕшĕсенче Мускавра суту-илӳ ярмăрkки иртет. Раççей Правительствин йышăнăвĕпе тата Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕпе Мускав хулин Правительстви пĕрле килĕштерсе ĕçлесси пирки тунă килĕшĕве тĕпе хурса ку ярмăрккăна пирĕн республикăран та ял хуçалăх продукцийĕпе халăх художество промыслисен тĕсĕсене сутакансене чĕнеççĕ. Вĕсене Мускав хулин тĕп административлă округĕн Тагански районĕн территорийĕнче вырнаçтараççĕ.

Суту-илӳ ярмăрккине йĕркелесе ертсе пыраканĕ – «Чăваш Республикин апат-çимĕç фончĕ».

Çавна каласа хăварасшăн: Мускав пасарĕсенче çĕр улмин 1 килограмĕ 12–15 тенкĕ, купăста, кишĕр тата кăшман 16–18 тенкĕ тăраççĕ.

Ярмăрккăна ял хуçалăх продукцине туса илекен пур хуçалăх формиллĕ предприятисем те хутшăнма пултараççĕ. Кăмăл пуррисен çак адреспа заявкăсем тăратмалла: КУП ЧР «Продовольственный фонд Чувашской Республики», факс: 21-34-64 е электронлă почтăпа:prodfond@mail.ru.

Суту-илӳ вырăнĕсемшĕн тӳлемелле мар. Автоколонна Етĕрне районĕнчи Никольскинчи ГИБДД постĕнчен октябрĕн 9-мĕшĕнче 7.00 сехетре çула тухать.

Çырăнтару – 2009

## Çитес çул валли çырăнтараççĕ

***Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2009 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнса илмелли хак – 191 тенкĕ 70 пус.***

***Хаклă вулаканăм, район хыпарçисĕр ан юлăр. Çитес çул та пĕрле пулар!***

**Райхаçат редакцийĕ.**